# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИН АНТОЛОГИЙӖ

## ПОЭЗИ

## ЧУНРИ СУКМАКСЕМ

Вăрман эп. Ман ұсланкăра
Асамлă Сольвейг пӳрчĕ пур.
Кĕрхи хĕвеллĕ юрăра
Васкавсăр ирĕлет хĕн-хур.

Пӳрт умĕнчи ұулұăсенче
Шăпа салхуланса кулать.
Шанăұпала ик чӳрече
Шуұăм ұути пек ұуталать.

Кунтах Нарспи утса иртет,
Асамлă Сольвейгăн хăни.
Юман патне ұитсе хӳхлет:
«Ăұта, ăұта эс, чун савни?!»

Ача пек ұутă юмахсем
Иртеұ Татьянăна йăтса.
Юлаұұĕ ырă упасем
Хаваслă кăмăлпа пăхса.

Кĕсле кĕвви янранипе
Пилеш хуллен-хуллен ташлать.
Такам асамлă аллипе
Мана ун еннелле туртать.

Ах, кам ку Ватă асатте!
Вăл ұитнĕ ик ұĕр-виұ ұĕре.
Ним ăнланми ұĕн ĕмĕрте
Пурнать сăнарĕ кĕвĕре.

Ав пӳрнесем сĕртĕннипе
Янраұұĕ кĕмĕл хĕлĕхсем.
Чĕтреұұĕ пĕлĕт варринче
Самолетсен шур йĕрĕсем.

Шыратăп ыттисем курман
Упа сарри ұеұкисене.
Хальччен манра мĕскер пулман
Кĕресшĕн манăн чĕрене.